25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРЬ 10 КĔÇНЕРНИКУН 211 (6146) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Тăвай райкомĕпе ĕççынни депутачĕсен райсовечĕн исполкомĕ тăратнă тăрăх, тырпулсене пухса кĕртес ĕçре пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата пахалăхлă ĕçленĕшĕн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине ç аксене кĕртнĕ:

57. **«Искра Ильича» колхоз** (колхоз председателĕ **И. В. Бонифатьев**). Колхоз 173 гектар çинчи кĕрхи тырăсене 6 ĕç кунĕнче тата 130 гектар çинчи çурхи тырăсене 5 ĕç кунĕнче вырса пуçтарнă. Кĕрхи тырăсем 170 гектар акса хăварнă, пĕлтĕрхипе танлаштарсан кĕрхи тырăсен çĕр лаптăкне 15 процент ӳстернĕ. Кĕлтесене капана хывассине, авăн çапассине тата государствăна тырă парассине колхоз ăнăçлăн туса пырать. Колхозниксем Н. Антонов, А. Петрова тата Е. Бонифатьева юлташсем фронтри пек ĕçлеççĕ.

58. **Тăвай МТС-ĕнчи тракторсен пĕрремĕш бригади** (бригадирĕ **П. С. Коровин**). Коровин юлташăн бригади, пĕтĕм ĕçе çемçе суха çине куçарсан, 2.066,92 гектар сухаланă, тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 116 процент тултарнă. 3.692 килограмм горючи перекетленĕ. Трактористсем А. Баданов, Г. Сорокин тата И. Егоров юлташсем фронтри пек ĕçленĕ.

Аслă уява пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илер!

Тепĕр икĕ уйăхран Октябрьти социализмлă аслă революци пуçланăранпа 25 çул тултарать. Çак аслă уява эпир кăçал нимĕç фашисчĕсене хирĕç пыракан отечественнăй вăрçăн хаяр условийĕсенче кĕтсе илетпĕр.

Октябрьти революци пулнăранпа иртнĕ çирĕм пилĕк çул хушшинче Совет Союзĕнчи нумай миллионлă ĕççынни сем коммунистсен партийĕн çулĕйĕрĕ пĕртеп-пĕр тĕрĕс çулйĕр пулнине, пĕр совет влаçĕ кăна ĕççыннисене ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç пама пултарнине хăйсен куçĕпе курса ĕненнĕç. Çавăнпа та вĕсем Октябрьти революци панă пăрклĕхсене, çав революци туса панă совет стройне, совет çĕршывне кӳпĕлсе хăварассишĕн нимĕçсен урса кайнă бандичĕсене хирĕç хăйсен пурнăçне шеллемесĕр кĕрешеççĕ, çапăçура каличчен этемлĕх курман паттăрлăхпа хĕюлăх кăтартаççĕ.

Пирĕн çĕршывпа государствăна пĕтерсе тăкма тата пирĕн пĕтĕм халăха вĕлерсе пĕтерме, пирĕн халăхăн мĕнпур пуянлăхĕсене тытса илме хапсăнакан тискер те усал тăшман, хăй йывăр çухатусем тӳснине пăхмасăрах, малалла çĕмĕрсе кĕме кăтланать. Вăл пире, пирĕн арăмсене, пирĕн ачасене, пирĕн атте-аннесене нимĕç улпучĕсен чури, ĕç выльăхĕ туса хума шутлать. Вăл пирĕн историе 25 çуллăха каялла тавăрма ĕмĕтленет. Анчах нимĕçсем аслă совет халăхне пусмăрлăха илсе ӳкереймĕç, пире чура тăваймĕç. Пирĕн халăхăн мĕнпур вăйĕсем çĕнтерӳ тăвас шухăшпа, хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр кĕрешсе çĕнтерӳ тăвас ĕмĕтпе вĕресе тăраççĕ.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле чăваш халăхĕ те фронтра та, тылра та паттăррăн кĕрешет. Октябрьти революци пула, коммунистсен партийĕ ертсе пынипе аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе этем тивĕçлĕхне илнĕ, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăç тунă чăваш халăхĕ, ытти суслă халăхсемпе пĕрле çумма-çуммăн тăрса, тăшмана пĕтерсе тăкасшăн çапăçать. Пирĕн халăхăн паттăр ывăлĕсем Совет Союзĕн Геройĕн ятне илме тивĕçлĕ пулчĕç. Нумаях пулмасть эпир хаçатра Совет Союзĕн Геройĕ батальоннăй комиссар Б. М. Васильев çинчен пичетлесе кăлартăмăр. Борис Михайлович ачасен çуртĕнче ӳссе воспитани илнĕ. Ăна совет влаçĕ пăхса çитĕнтернĕ, ăна Октябрьти революци çул уçса панă. Вăл халĕ совет влаçĕшĕн, Октябрьти революци панă ырă пурнăçшăн хăйĕн вăйне шеллемесĕр çапăçать. Пирĕн халăхăн тылри паттăрлăхне те нумай тĕслĕхсемпе кăтартса пама пулать.

Фронт ыйтнине тивĕçтерес тĕлĕшпе пирĕн тыл ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Çĕршывра Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăрту хăватлăн сарăлса кайрĕ. Промышленность уйăхран уйăха лайăхрах та лайăхрах ĕçлесе, фронта хĕçпăшалсемпе боеприпассем парса тăрать. Социализмлă ăмăртура пирĕн республикăри предприятисем те малта тухма пултарчĕç. Канашри вагонсем юсакан завод август уйăхĕнче те лайăх ĕçлесе, пĕр халăх комиссарĕн ячĕпе малта пыракан предприятисен ретне тăчĕ. Н-ски—заводпа Çĕмĕрле комбиначĕ программăна уйăхран уйăхах тултарса пыраççĕ.

Анчах Октябрьти социализмлă аслă революци 25 çул тултарнă уява пирĕн татах та пысăкрах çитĕнӳсемпе кĕтсе илсе паллă тăвас пулать. Эпир хамăр хаçатра çак кунсенче Молотов хулинчи промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисемпе служащисем Сталин юлташ патне çырнă çырăва пичетлесе кăлартăмăр. Вĕсем çапла çыраççĕ:

«Халĕ эпир Октябрьти аслă революци 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленетпĕр. Хамăрăн тăван çĕршыв умĕнчи пысăк ответлăха ăнланса илсе, эпир хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр тата çав обязательствăсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртме Сире сăмах паратпăр. Пирĕн кулăра государствăна панă плана пурнăçа кĕртмесĕр пĕр предприяти те ан пултăр тесе, эпир пĕтĕм вăя хурса ĕçлĕпĕр.

Сентябрь уйăхĕнче эпир хулари кашни рабочин ĕç тухăçлăхне, август уйăхĕнче ӳстернипе танлаштарсан, 5 процентран кая мар ӳстерме сăмах паратпăр».

Кунсăр пуçне, Молотов хулинчи рабочисемпе служащисем уяв тĕлне çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем туса кăларассине алла илме, рационализаторла сĕнӳсене ĕçе кĕртсе 20 миллион тенкĕ перекетлеме, топливăна перекетлеме пулса обязательствăсем илнĕ.

Аслă уяв умĕн социализмлă ăмăртăва пирĕн предприятисенче татах та вăйлатса ярас пулать. Кашни предприятин, кашни колхозăн, кашни рабочипе колхозникĕн Октябрьти революци 25 çул тултарнине пысăк çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленмелле. Уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса конкретнăй обязательствăсем илмелле, вĕсене кунран-кунах тултарса пымалла. Предприятисемпе учрежденисенчи тата колхозсенчи парторганизацисем умĕнче çак енĕпе пысăк задача тăрать: вĕсен социализмлă ăмăртăва рабочисемпе колхозниксене пурне те явăçтармалла, çав ăмăртура хăйсен пример кăтартса пымалла.

Рабочи юлташсем! Производствăра хамăрăн пурнăçа шеллемесĕр ĕçлесе, фронт валли ытларах та ытларах хĕçпăшал, боеприпассем туса парар! Октябрьти революци 25 çул тултарнине фронтра та, тылра та пысăк çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер!

Колхозник юлташсем! Ялхуçалăхĕнчи пĕтĕм ĕçсене пысăк хăвăртлăхпа тата лайăх пахалăхпа туса пырса, фронт валли ытларах та ытларах апатçимĕç, тумтир хатĕрлер! Октябрьти революци уявне ялхуçалăх çулне пур енĕпе те ăнăçлăн вĕçленипе кĕтсе илер!

В. М. Молотов юлташ Норвеги посолне г-н Р. Андворда йышăннă

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ Норвегин ССР Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне г-н Р. Андворда йышăннă.

Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатĕнче

Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ калаçусем хыççăн ССР Союзĕн правительствипе Чехословаки, Югослави тата Норвеги правительствисем хушшинче килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх, çав çĕршывсен халăхĕсемпе правительствисем хушшинчи хальхи вăхăтри туслă çыхăнусене палăртса, çавăн пекех тата гитлерла Германие хирĕç пыракан вăрçări тачă союза палăртса, ССР Союзĕн Чехословаки, Югослави, Норвеги правительствисем çумĕнчи дипломатиллĕ представительствисене тата асăннă çĕршывсен ССР Союзĕнчи дипломатиллĕ представительствисене, пĕр-пĕринпе килĕштерсе, Миссисенчен Посольствăсем туса хунă.

Çав çĕршывсен правительствисем пĕр-пĕрин патне янă посланниксене посолсен рангне куçарнă.

Авăн çапнă çĕрте, кĕлте турттарнă çĕрте пулакан тăккаланчăксене хирĕç кĕрешер, кашни килограмм тырра тĕрĕс шута илер!

Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз авăн çапса пĕтерчĕ

ÇЕМĔРЛЕ, сентябрĕн 9-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри колхозсем фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхра социализмлă ăмăртăва сарса пынă май пысăк ĕçсем турĕç. Уйрăм колхозсем тырă вырса пĕтерсе капана хывас, авăн çапас, государствăна тырă парса татас тата кĕрхи тырăсене акса пĕтерес ĕçсене вĕçлерĕç. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ежов юлташ) кĕрхи тата çурхи тырăсене çапса пĕтернĕ. Кунсăр пуçне колхоз йĕтĕнпе кантăрсене те татса пĕтерсе çапнă, кантăрсене сӳс тума шыва кутнă, йĕтĕнсене сарса хунă. Халĕ колхозниксем çĕрулми кăлараççĕ, пахча-çимĕçсене пуçтараççĕ. Пĕр кун хушшинче колхозниксем 2,5 гектар çĕрулми кăларнă. Сентябрĕн 10-мĕшĕнче вĕсем пур участокри çĕрулмисене те кăларса пĕтерĕççĕ. «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз членĕсем те тăрăшса, организованно ĕçлеççĕ. Вĕсем тырăсене вырса пĕтерсе капана хыврĕç, тырăсен 50 процентне çапрĕç.

Фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха хутшăннă хыççăн Хутарти Ленин ячĕпе тăракан, Турханти «Комбинат», Мулкачкинăри «Молодая сила», Чăваш Улхашри «Искра» колхозсем те ĕçре паллă улшăнусем турĕç. Тырпулсене пĕтĕмпех вырса пĕтерчĕç, çак кунсенчех кĕлтесене капана хывса пĕтереççĕ. «Комбинат» колхозра уйхирте ĕçлекенсенчен 50 проценчĕ ытла нормăсене 120—200 процент тултараççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем А. Майорова, А. Никитина, А. Федяров кунне 8—10 лав кĕлте турттараççĕ.

Сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем пĕтĕмпе 8.063 гектар тырă вырса 6.775 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, 3.367 гектар тыррине çапнă.

Х. ЛИСИН.

Кĕлтесене капана хывса пĕтернĕ

ÇĔРПУ. Уйхир ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлес тĕлĕшпе пуçланнă вунăкунлăха «Пучах» колхозри колхозниксем активлăн хутшăнса, тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртес, ялхуçалăх продукчĕсене государствăна тăратас ĕçе вăйлатрĕç. Колхозри пур бригадăсем те кĕракине ăнăçлăн вĕçлерĕç, планран иртгерсе 16 гектар тырă акса хăварнă. Машиновед А. Архипов кулленех плана 180—200 процент ытларах тултарса пычĕ. Сухаçăсем В. Команов, И. Кузьмин, сӳреçĕ А. Кузьмин аван ĕçлерĕç.

Кăçалхи çул колхозниксем ăнса пулнă тырпула пĕтĕм вăя хурса, фронтри боецсем пек паттăррăн ĕçлесе, кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа вырса пĕтерчĕç. Ырăш тата çуртырисем вырнă чухне жнейкăпа, кĕрепленлĕ çавасемпе туллин усă курнă. 67 çулти колхозник Иван Алексеев тата Григорий Тимофеев çавапа ĕçлесе нормăна кунсеренех тултарса пынă. Паянхи куна 4-мĕшпе 2-мĕш бригадăсем кĕрхипе çурхи тырăсене кӳрсе капана хывса çитернĕ. 4-мĕш бригадăри колхозниксем кĕрхи тырăсене 85 процент, çуртырисене 12 гектар ытла çапнă. Авăн çапас, кĕлте кӳрес çĕрте А. Архипов, Е. Иванова, О. Григорьева, Е. Васильев, капан тăвакансем И. Алексеевпа Г. Тимофеев икшер норма тултараççĕ. Ку бригадăсенчи колхозниксем ытти бригадăсене те пулăшаççĕ.

Колхоз малтанхи вăхăтра государствăна тырă тăратассипе юлса пыратчĕ. Вунăкунлăхра ĕç темиçе хут вăйланчĕ. Государствăна тырă тăратмалли графика колхоз ытлашшипех тултарса пырать. Тырă турттарма чи лайăх урапасемпе лашасене уйăрнă.

М. ЯКОВЛЕВ.

Кая юлма сăлтав çук

ИЕПРЕÇ, сентябрĕн 9-мĕш. (**Телефонпа**). Колхозсем фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăх пуçланнăранпа тырăсене вырса пĕтерсе капана хывас, авăн çапса государствăна тырă парас тĕлĕшпе çине тăрсах ĕçлеççĕ. Сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне районри 48 колхозран 30 колхоз, тырăсене вырса пĕтерсе, кĕлтесене капана хывма тытăнчĕç. «Правда», «Трактор», «Осоавиахим», «11 лет Чувашии», «Коминтерн» тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем тепĕр ик-виçĕ кунтан кĕлтесене пĕтĕмĕшпех кӳрсе пĕтереççĕ.

Кĕлтесене хăвăрт капана хывса çитерес шутпа Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра вăкăрсене, хĕсĕр юлнă ĕнесене кӳлнĕ. Вĕсемпе кĕлте кӳреççĕ. Вăкăрсемпе кĕлте кӳрекен колхозниксем хăйсен кулленхи ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Кунсăр пуçне, кĕлтесене алăпа йăтса капана хывассине те аван организациленĕ. Çавăн пек тунине пула колхоз кĕраканче лаша вăйĕпе туллин усă курчĕ, кĕраки планне кĕске вăхăт хушшинчех 102 процент пултарчĕ.

«Коминтерн» колхозра кăçал тырăсене машинăсемпе ытларах вырнă. Пĕтĕм вырмалли тырпулăн 61 процентне жнейкăсемпе, ыттисене комбайнпа тата 4 процентне алăпа вырса пуçтарнă. Колхозниксем пысăк хастарлăхпа ĕçлесе, хăйсен кулленхи нормисене 150—200-шер процент тултарса пынă. Колхозра ĕçе тĕрĕс организациленĕ май, кĕлтесене капана хывас, авăн çапас, государствăна тырă парас, пахча-çимĕçсене пуçтарас ĕçсем пĕр вăхăтрах пурнăçланса пыраççĕ. Государствăна тырă леçме 9 лаша уйăрнă. Вĕсемпе туллин усă курса, колхоз, фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăхăн малтанхи 5 кунĕнче государствăна 46,6 центнер вырăнне 118,4 центнер леçсе, графика 145 процент тултарнă.

«Красный водник» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хываççĕ. «Красный водник» колхозра тырăсене вырса пынăçемĕн тӳрех капана хывассине лайăх организациленĕ. Çапла ĕçленипе вĕсем кĕлтесене хăвăрт капана хывса пĕтереççĕ.

Калас пулать, районри хăшпĕр колхозсем халĕ те тимсĕррĕн ĕçлеççĕ-ха. «Красный металлист» колхозра ĕç вăйĕ те çителĕклĕ. Апла пулин те тырă вырас ĕç питĕ кая юлнă. Сентябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне пурĕ те тыррăн 85 процентне çеç вырнă, кĕлтесене 38 процентне анчах капана хывнă. Колхоз фронтри пек ĕçлемелли вунăкунлăха та хутшăнман. Государствăна тырă парас ĕç начар пырать, кĕрхи тырăсене акас плана 60 процент кăна тултарнă.

Çавнашкалах «Социализм» колхоз та кĕлтесене кӳрес плана 44 процент, «Большевик» колхоз 56 процент, «МОПР» колхоз 54 процент, «Красная нива» колхоз 21 процент çеç тултарнă.

Д. МИХАЙЛОВ.

Колхозри молотилкăсемпе усă курман çĕрте

ПЕРВОМАЙСКОЕ, сентябрĕн 8-мĕш. Районĕпе илсен, паянхи кун тĕлне тырăсене 94 процент вырса пуçтарнă. Малта пыракан «Ударник», «Правда», «Дуброво» тата ытти колхозсем тырăсене кĕске вăхăт хушшинче вырса пĕтерчĕç, кĕлтесене капана хыврĕç.

Район кĕлтесене капана хывассине 55,5 процент пурнăçланă. «Çĕнĕ пурнăç», «15 лет Чувашии», «Светлая жизнь» колхозсенче кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хываççĕ, кĕлте кӳнĕ çĕрте вăкăрсемпе тата хĕсĕр ĕнесемпе ĕçлеççĕ.

Районри колхозсен уйхирĕсенче 1.500 çын тăккаланчăксене пухаççĕ. Ку ĕçе уйрăмăнах шкул ачисемпе пионерсене явăçтарнă. Тăккаланса юлнă пучахсене пуçтарас ĕçе «Марат», «Красный восток», «Çĕнĕ пурнăç» колхозсенче лайăх йĕркеленĕ. «Çĕнĕ пурнăç» колхозра 89 гектар çĕр лаптăкĕ çинче шкул ачисемпе пионерсем 625 килограмм пучах пуçтарнă.

Районри колхозсем уйрăмăнах авăн çапас ĕçре кая юлса пыраççĕ. Халĕ вырса пуçтарнă тырпулăн 27 процентне çеç çапнă. Ку вăл питĕ çителĕксĕр. Авăн çапассине «Восход», «Пролетарий» колхозсенче питĕ начар организациленĕ. Çак колхозсенче авăн çапас тĕлĕшпе ĕçлекен бригадăсем туман, колхозри молотилкăсемпе усă курмаççĕ, алăпа авăн çапма та ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрман. «Динамо», «Победа» тата Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозсенче тăкаксем пысăк, анчах пучахсене пухас ĕçе организацилемен.

А. БРАНИЦЫН.

Туртăм вăйне кĕрхи çĕртме тума мобилизациленĕ

КАНАШ, сентябрĕн 9-мĕш. (**Телефонпа**). Чылай колхозсем кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕç. «Новый путь» колхозра пĕр кун хушшинче алăпа çĕклесе 9 гектар, «Мотор» колхозра 10 гектар, «Броневик» колхозра 10 гектар ытла капана хывнă. Сухайкасси ялсоветĕнчи колхозсем туртăм вăйне государствăна тырă парас тата кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе мобилизацилесе, кĕлтесене алăпа çĕклесе капана хывас ĕçе лайăх пуçарса ячĕç.

А. ДУБРОДУШЕВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç **Сталинградран** хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех тата **Новороссийск, Моздок** районĕсенче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сентябрĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 30 танкĕпе бронемашинине çити, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине ытла, горючи тултарнă 4 автоцистернине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боевой тата зенитнăй артиллерин 7 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противника хирĕç оборонăллă хĕрӳллĕ çапăçусем туса пынă. Нимĕçсем пĕр ансăр участокра танксемпе атака тунă. Совет артиллерийĕ тăшмана малалла кайма чарса лартнă. Танксемпе пехотăн çĕнĕ вăйĕсене илсе пырса тата авиаци пулăшса пынипе, гитлеровецсем пирĕн позицисене иккĕмĕш хут атакăланă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн чаçсем оборонăн тепĕр рубежĕ патне чакнă. Н-ски соединенин участокĕнче гитлеровецсем халăх пурăнакан пĕр пункта йышăнса илме хăтланнă. Кунĕпех юнлă çапăçусем пынă, вĕсем пĕрре пĕр енĕшĕн, тепре тепĕр енĕшĕн ăнăçлă пулнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен 5 танк тата 450 салтакпа офицера çити пĕтнĕ.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем наступлени тума пуçланă та пирĕн чаçсен флангне пырса тухма хăтланнă. Противникăн атакине пирĕн танкистсем хирĕç пырса çапса сирсе янă. Нимĕçсен 9 танкне персе çĕмĕрнĕ тата гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Н-ски часть противникăн танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсен атакисене иккĕмĕш кун ĕнтĕ сире-сире ярать.

* * *

Новороссийск районĕнче противникăн пирĕн оборнăна савăлланса кĕнĕ танкĕсемпе пехотине хирĕç вăйлăн çапăçнă. Нимĕç автоматчикĕсем пирĕн артиллерин батарейине тылран пырса кĕрсе тытса илме хăтланнă. Артиллерист-краснофлотецсем тăшмана каялла сирсе янă. Политрук Родин юлташ ертсе пыракан пулеметчиксем противникăн автоматчикĕсен ушкăнне тӳррĕн пере-пере вĕлернĕ. Тепĕр участокра Еромоленко юлташăн чаçĕнчи боецсем тăшманăн йышлăрах вăйĕсене хирĕç виçĕ сехет хушши çапăçнă. Çав çапăçура вĕсем нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче противник, артиллерипе авиаци персе хӳтĕлесе тăнипе, хăйĕн пехотипе танкĕсене шыв урлă каçарса янă. Совет пехотинецĕсем, артиллеристсемпе тата бронебойщиксемпе çыхăнса кĕрешсе, нимĕçсен 10 танкне, 6 бронемашинине персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă тата 850 салтакпа офицера çити вĕлерсе пĕтернĕ. Противник пирĕннисем çапнине чăтайманнипе çапăçуран тухма хăтланнă. Пирĕн чаçсем ăна флангран пырса çапнă, вĕсем халь противникăн группировкине пĕтересшĕн çапăçаççĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн Карасев юлташ ертсе пыракан летчикштурмовикĕсем противникăн аэродромĕ çине вĕçсе пырса тапăннă. Зениткăсен вăйлă вут-çулăмĕ урлă каçса тухса, пирĕн летчиксем нимĕçсен виçĕ моторлă 10 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Вĕлернĕ нимĕç салтакĕ фриц Римель çумĕнче «Çапăçусене аса илни» ятлă дневник тупнă. Аяларахра çав дневникран пĕр çапăçу çинчен çырса хунине илсе пичетлетпĕр:

«Тăватă сехетре наступлени пуçланчĕ. Пĕлтĕр эпĕ, пуринчен те малта пырас тесе, мотоциклист пулма кăмăл турăм; хальхи вăхăтра манăн фронтран инçерех вырăнта тăрас килет... Вырăссен пулемечĕсем шатăртатма тытăнчĕç. Пĕрех те лайăх мар! Акă ĕнтĕ малтанхи жертвăсем. Эпир ялăн хĕвелтухăç хĕррине пырса тухрăмăр та яла тытса илме хăтланса пăхрăмăр. Кĕтмен çĕртен çуртсенчен питĕ хытă тата питĕ тĕл пеме тытăнчĕç. Пĕрин хыççăн тепри 32 çын вилсе выртрĕç. Баульмберг лейтенант вилчĕ. Эрле, Мюллер, Ксари тата ыттисем те пĕтрĕç. Çĕрле пулни çеç пире пĕтĕмпех пĕтерсе хурасран çăлса хăварчĕ...»

Рихард салтака унăн аппĕ Бейгерлитцран çапла çырать: «Хуйхăпа чухăнлăх ӳснĕçемĕн ӳссе пыраççĕ.. Сана кунти çĕнĕ хыпарсем интереслентерсçĕ пуль. Анчах та эпĕ сана савăнмаллине питĕ сахал каласа пама пултаратăп. Çак эрнере эпир Ганс Иозеф вилни çинчен хуйхăллă хыпар илтĕмĕр. Ганс Клейн, Эдуард ывăлĕ, йывăр амăннă. Иозеф Штифмайер тифпа чирленĕ... Çак вăхăт хушшинче сахал çисе пурăннипе кунта та халăх нумай вилчĕ: ватă Ферд, Мартин Тики, Цейлер Шанлен, Бертль Бауэр, ватă вагнерша, Иоган Феттер, Гертль, пĕчĕк Гаубель Максль, Иоганн Гейер тата ытти нумай çынсем вилчĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем Польшăна хăйсен колонийĕ туса хунă. Кунсерен поляк хресченĕсен ытларах та ытларах хуçалăхĕсене нимĕçсем Германин харпăрлăхĕ тесе пĕлтереççĕ те вĕсене Прусси колонисчĕсене пăраççĕ, поляк хресченĕсене вара батраксем туса хураççĕ. Польшăра Германин «Остланд» ятлă обществине туса хунă; çав общество Польшăн 7 миллион гектар ытла çĕрне хăйĕн аллине çавăрса илнĕ ĕнтĕ. Хĕвелтухăç Пруссирен пынă нимĕç помещикĕ Эмиль Бруду Феликс Яновичăн, Коканскин, Жральскин, Краевскин тата ытти нумай поляк хресченĕсен хуçалăхĕсене хăй аллине çавăрса илнĕ. Прусси помещикĕ хресченсенчен вĕсен пĕтĕм çĕрне, выльăх-чĕрлĕхне, çурчĕсене тата хуçалăх хуралтисене тытса илнĕ. Ĕлĕк Феликс Яковичăн 50 морг çĕр, икĕ лаша тата çурт пулнă. Нимĕçсем ăна чухăна кăларнă. Халĕ ĕнтĕ Яновичăн хăйĕн пӳртĕнче пĕр кĕтес йышăнса пурăннăшăн нимĕç помещикĕ валли уйăхне 7 кун ĕçлеме тивет. Çĕнĕ помещик, штурмовиксен руководителĕ пулнă. Вилли Бланк, таврари ялсенчен çĕршер поляк хресченĕсене хăваласа пухнă та вĕсене хăй валли талăкра 16-шар сехет ĕçлеттерет. Унăн именинче хресченсем кивĕ бараксенче пурăнаççĕ, питех те начар апат çиеççĕ. Вĕсене хăйсен ирĕкĕпе çав территорирен тухса кайма чарнă. Пĕчĕк айăпа кĕнĕшĕнех хресченсене тискеррĕн хĕнесе пĕтереççĕ, е концентрациллĕ лагере яраççĕ. Гитлеровецсем хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенче тăвакан нимĕçле йĕркесем çавăн пек ĕнтĕ вĕсем.

Сентябрĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç **Сталинградран** хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, çавăн пекех тата **Новороссийск, Моздок** районĕсенче çапăçнă.

Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хĕрӳллĕн çапăçнă. Пысăк вăйсем пухса тăратса тата питех те пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах, гитлеровецсем пирĕн позицисене атакăлаççĕ. Противника уйрăмах пирĕн артиллери йывăр çухатусем тӳстерет. Н-ски соединенин участокĕнче наступлени тăвакан нимĕç танкĕсем мина хурса тухнă вырăна пырса кĕнĕ. Минăсем çине пулса, противникăн 3 танкĕ çĕмĕрĕлнĕ. Пирĕн артиллеристсем нимĕçсен çав мина хурса тухнă вырăн умĕнче çӳрене ытти танкĕсене темиçе хутчен вăйлăн пенĕ. Артиллери противникăн 6 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра халăх пурăнакан пункт патĕнче пулнă çапăçура нимĕç пехотин пĕр ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çапăçусем пынă. Пирĕн минометсен пĕр подразделенийĕ тăшманăн пехоти пухăнса тăнă вырăна сасартăк пеме пуçланă. 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ е амантнă. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн хаяр атакине сирсе янă. Нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 6 пулемет, 2 миномет, автоматсем тата винтовкăсем тытса илнĕ. Пехота хĕçпăшалĕнчен персе, нимĕçсен пĕр бомбардировщикне ӳкернĕ.

* * *

Новороссийск районĕнче пирĕн чаçсем противникăн пирĕн оборонăна савăлланса кĕнĕ войскисене хирĕç вăйлăн çапăçнă. Гвардин миномет подразделенийĕсем карăс пере-пере ярса нимĕçсен войскăсем турттарса пыракан 40 автомашинине çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 6 танкне, минометсен 3 батарейине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 140 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Пирĕн разведка тăвакан отрядсем, противникăн тылĕнче кĕрешекенскерсем, нимĕçсен 190 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн шыв урлă каçнă группировкине пĕтерессшĕн çапăçнă. Артиллерипе бронебойщиксем нимĕçсен 5 танкне персе çĕмĕрнĕ. Тăшман пехотин пĕр ротине аркатса тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Н-ски соединенин боецĕсем, противника çирĕплетнĕ районран хăваласа кăларса, халăх пурăнакан виçĕ

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра

Совет Информаци Бюровěнчен

Сентябрěн 9-мěшěнчи ирхи пěлтерěвěн вěçě

[illegible] илнě. Халěх [illegible] çапăçусенче нимěçсен 40 салтакěпе офицерě вилнě. Пирěннисем трофейсем тытса илнě тата тытăнса илнě.

латса хунă аллисенчен йывăç çумне çакса хурасçě. Салтака икě сехет хушши çавăн пек çакăнтарса тăратасçě.

* * *

Венгерсен 19-мěш пехотнăй дивизийěнчи 5-мěш полкран тытнă венгер салтакě Иштван Ференц çапла каласа панă: «Пирěн войскăсем [illegible] çухатусем тусрěç. Вырăссем пирěн полка аркатса тăкрěç, [illegible] пайě çеç тăрса юлнă. [illegible] Совет [illegible] пысăк çухату кăрессě. Нумай [illegible] хăрушă [illegible] 6-мěш полкăн [illegible] батальонне [illegible] Венгерсем [illegible] салтакěсем [illegible] Вěсем çилěпе, нимěçсене [illegible] Салтаксем çакăн пек [illegible] чăсем [illegible] «Гитлер [illegible] офицерсем, салтаксем [illegible] пусарса тесе, вěсене [illegible] Айăпа кěнě салтака хуç[illegible]

Нимěç батальонěн вилнě командирě Тельбайге капитан сумкинче Вернер Репке капитан çырнă çыру тупăннă. Çав çырура вăл çапла çырать: «Юлашки вăхăтра эпě пěтěм батальонпа пěрле хěрүллě çапăçусенче пултăм. Çухатусем питех те пысăк. Батальонран пěтěмпе илсен пěр рота та юлаймарě. Вилнě [illegible] вырăса тытăнă [illegible] Вěсем пурне те [illegible] пěтмелле [illegible] Вěсем [illegible] Вěсен [illegible] вăйне [illegible] «Т—34» [illegible] Вěсем [illegible]

Новороссийск районěнчи çапăçусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрěн 7-мěш. (ТАСС спецкорр). Новороссийск районěнче вăйлă çапăçусем пырасçě. Пысăк вăйсем пуçтарса, противник вěсене тăтăшах çапăçăва кěртсе пырать. Пирěн чăсем тăшманăн [illegible] хаяррăн хěсěннě чарса тăрасçě, ăна пысăк çухатусем тустересçě.

Новороссийск [illegible] хěрүллě çапăçусенче [illegible] хастарлăн [illegible] кăтартать. Хастарлă черноморецсем [illegible] çинчи артиллерисен [illegible] пулăшса [illegible]

[illegible] ертсе пыракансене, хирěç тăмалли [illegible] пехота, пěр эскадрон кавалери, 5 танкеткăпа [illegible] Моряксем [illegible] Вěсем гитлеровецсем [illegible]

[illegible] Тăшман «За родину» [illegible] Д. ЛАПОНОГОВ.

И. ЛАПОНОГОВ.

Танка хирěç пěччен кěрешни

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрěн 7-мěш. (ТАСС спецкорр). Шофер Алексей [illegible] Фролов [illegible]

[illegible] çěртен нимěç танкě [illegible] пуçланă. Автомашинăна вут хыпса илнě. Фролов кěвелçавранăшсем хушшине кěрсе пытанма ĕлкěрнě.

Шоферăн чěри таврăс хаяррăн тулса ларнă. Танк хир тăрăх çавăрăнса çавăрăна пырса Фролов тěлне çитсен,

Фролов [illegible] нимěç танкě [illegible] çаврăнса [illegible] ниччен тěлěнсе кайса, хăйсен танкне чарнă та люка кăпăт уçнă. Çав секундăрах унта гранатăсем ывтăннă. Икě вăйлă взрыв пулнă. Пирěн хастарлă воин ун чухне хăй пěтерсе тăкнă танкистсенчен вуншар метрта тăнă, вăл пěрре те суранланман.

Д. ЩУКИН.

Пирěн земляксем

Икě сержант

Связной таварăнна хыççăн вăхăт нумаях та иртмерě, комиссар умне икě командир чупса пычěç.

— Юлташ комиссар, иккěмěш ротăн отделени командирě сержант Никонов сирěн приказ тăрăх килчě...

— Юлташ комиссар, бронебойщиксен отделени командирě сержант Авксентьев.

Комиссар ирěк панă хыççăн, вěсем симěс курăк çине юнашар ларчěç. Пěрин аллинче—винтовка, теприн аллинче—карабин. Вěсем винтовкăпа карабина, противогаза нихăçан та хăйсенчен уйăрмаççě. Хěçпăшал, фронт вěсен туслăхне çирěплетнě. Пěр районра пурăннă тата тăван колхозсем хушши çывăх пулнă пулин те, вěсем пěр-пěрин çинчен хальхи пек лайăх пěлсе тăман. Гитлерла ирсěрсене хирěç пыракан вăрçăра вěсен туслăхě çирěпленнě.

Вăрçă пуçланиччен Елчěк районěнчи Çěнě Патрекелěнчи «Хунав» колхоз бригадирě пулса ěçленě Иван Емельянович Никонов тата çав районри «Красный партизан» колхозра учительре ěçленě Дмитрий Авксентьевич Авксентьев юлташсемпе фронтăн малти линийěнче курса калаçма тěл пирě.

Наступление кěрсе тухнă хыççăн, вěсем винтовкăсемпе ытти тěрлě хěçпăшалсене тасатса çу сěрнě.

Пěрле фашистсене хирěç çапăçаççě, пěрле мунча кěреççě, пěрле пушă вăхăта ирттереççě Никоновпа Авксентьев сержантсем. Вěсен куллен уйăрăлми тусěсем—отделенири боецсем. Вырăссем, украинецсем, белоруссем, чăвашсем, казахсем алла-аллăн тытăçса тăшмана хирěç хаяррăн çапăçаççě. Сержантсем вěсене тăшмана хирěç аслă пулса, хăрама пěлмесěр çапăçма вěрентеççě, çапăçу хирěнче боецсене хăйсен примерěпе хавхалантараççě.

Малтанхи хут çапăçăва кěрсен, Никоновпа Авксентьев сержантсем хăйсене хăраса тыткаланă. Умра мина ўксе шартлатса сурăлни, пулеметсен сасси, пульăсем пуç тăррипе шăхăра-шăхăра иртни темěн пекех туйăннă. Халě ун пек мар...

— Вăрçă шавсăр-мěнсěр пулмасть вěт,—тет сержант Авксентьев.

— Иртнě наступленире Никоновпа Авксентьев отделенийěсем питě маттур çапăçрěç... Командовани вěсене правительство наградине илме тăратрě,—тесе каласа парать çак сержантсем çинчен комиссар Березин.

Артиллери канонади. Çěр чěтрет. Час-часах снарядсем шартлата-шартлата çурăлни хăлхана питěрсе лартассăнах туйăнать. Фронтовиксем çак обстановкăна хăнăхнă. Гитлеровецсем хăйсен позицийěсене таврас ěмěтпе, пěр кун хушшинче темиçе хут та контратакăна тухма пăхрěç. Пěррехинче вěсем пирěн позици еннелле вунă танк ытла кăларса ячěç. Танксен хўттипе икě батальон ытла пехота пырать. Çав вăхăтрах сывлăшра моторсем кěрленě сасă янăраса кайрě. Пирěн оборона çийěпе бомбардировщиксем вěçсе иртрěç. Вунвиçě «Юнкерс» каялла çавăрăнчěç те, бомбăсем пăрахма тытăнчěç.

Боецсемпе командирсенчен никам та хăраса ўкмерě. Никам та пěр утăм та каялла чакмарě.

Çапăçура, ытти боецсемпе пěрле, Авксентьевпа Никонов юлташсен отделенийěсем маттуррăн кěрешрěç. Тăшман контратакине сирсе пăрахса, ăна малалла хěссе пычěç. Сержант Никонов тата унăн боецěсем пěр çапăçу вăхăтěнче гитлерла ирсěрсене çичě блиндажран хăваласа кăларнă. Фрицсенчен чылайěшě блиндажсенчех тăрăна-тăрăна юлнă. Пěр блиндажа граната ывăтса, сержант Никонов икě фашиста вěлернě. Тăшманăн икě пулеметне тытса илнě. Ытти отделенисенчи боецсемпе пěрле 6 нимěçе тыткăна илнě.

Çак кунсенче кăна партие кěнě Никонов юлташ тăшмансене хирěç çакăн пек паттăррăн кěрешет.

Çирěмшěр çулхи комсомолец сержант Дмитрий Авксентьев та хăйěн тусěнчен юлмасть. Тăшман пулеметчикě тăтăшах пирěн пехота çине персе тăнă. Авксентьев хырăмпа шуса пырать те граната ывăтать. Блиндаж çавăнтах сывлăшалла сирпěнет. Тăшман тăпра айне пулса юлать.

Сержант Авксентьев наступление кěрсе тухнă хыççăн, хăйне партине илме ыйтса заявлени пачě.

Политрук Т. МАЙОРОВ.

Пěтěм Союзри социализмлă ăмăрту

Пулас рабочисен паха ěçěсем

Пирěн республикăри ремесленнăй, чугунçул училищисем тата ФЗО шкулěсем Пěтěм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса ěçлеме пуçлани виçě уйăх çитрě. Çак виçě уйăх хушшинче училищěсемпе ФЗО шкулěсенче вěренекенсем вěренўпе производствăри ěçсене чылаях лайăхлатрěç, фронт валли тата промышленноçпа транспорт валли продукци кăларассине ўстерчěç.

Социализмлă ăмăртура лайăх ěçлесе, август уйăхěнче Канашри иккěмěш номерлě чугунçул училищи пěррěмěш вырăн йышăнчě. Ку училищěри ачасем вěренўре ěлкěрсе пырасси 84,9 процента çитрě. Ачасем вěренўри тата производствăри программăна лайăх пěлсе çитнě.

Училищěре вěренекенсем ěçе пěлсе тăваççě. Инструментсемпе станоксене таса тытаççě, общежитисенче таса пурăнассине куллен йěлана кěртнě. Политикăллă-массăллă ěçе аван йěркеленě. Училищěре вěренекенсем хушшинче калаçусем, докладсемпе лекцисем тăтăшах пулаççě. Çарпа физкультура кружокěсем ěçлеççě. Ку тěлěшпе училище директорěн заместителě Пантелеев юлташ начар мар ěçлет. Училищěри 1924—25 çулсенче çуралнă çамрăксем пурте всевобуч программине вěренсе пěтернě.

Вагонник-слесарьсен группинче вěренекен ачасем август уйăхěнче хăйсен нормисене 140,1 процент тултарнă. Группăра вěренекенсем производство ěçне «хорошо» тата «отлично» пěлеççě. Вěренўре ěлкěрсе пырасси 90 процент шутланать.

Вагонник-слесарьсен группинче вěренекен Ю. Андреев август уйăхěнче производство планне 300 процент тултарнă. Вăл инструментсене пěлсе тыткалать, кая юлакансене пулăшать.

Улатăрти пěррěмěш номерлě чугунçул училищинчи слесарь-паровозниксем те производствăра лайăх ěçлеççě. Ултăмěш группăри слесарь-паровозник В. Фролов васкавлă заказсем туса кăларас плана куллен 180—190 процент тултарать. Вăл август уйăхěнче 316 тенкě ěçлесе илнě.

Канашри 2-мěш номерлě чугунçул училищинче электросварщиксен группинче Е. Ожогина вěренет. Вěренўре, çавăн пекех производствăра та паха тěслěхсем кăтартать, хăйěн ěç нормине яланах 160 процент тултарать. Ăна группăри мастерăн помощникě пулса ěçлеме уйăрнă.

Анчах та çаксемпе лăпланса лармалла мар. Ěçпе вěренўре çитменлěхсем те пур-ха. Социализмлă ăмăрту ěçне пур училищěсемпе ФЗО шкулěсенче те кирлě пек организацилемен. Хăшпěр шкулсенче ěçри тата вěренўри дисциплина çителěксěр.

Вěренўпе ěçри социализмлă ăмăртăва кирлě пек организацилесе, пысăк ěç тухăçлăхěшěн кěрешмелле.

Н. ФОМИН,

Ěç резервěсен Чăваш республикинчи Управлени начальникěн политика енěпе ěçлекен заместителě.

Çамрăк рабочисен патриотизмě

СĚМЕРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Пирěн умра вунă çамрăк рабочи. Вěсенчен чи асли 17 çулта, чи çамрăкки вуншиллěкре. Вěсем кăçалхи çулччен производствăра ěçлеме мар, унта ěçленине те курман. Комбината кăçалхи çулăн пуçламăшěнче кěнě.

Çамрăк рабочисене мастерсем çумне çирěплетнě. Опытлă мастерсем Таракановпа Тимошин юлташсем вěсене производствăн технологиллě процесěпе паллаштарнă, ěçлеме вěрентнě.

Вăхăт нумаях та иртмен, 10 çамрăкран 3 бригада организациленě. Вěсене ертсе пыма хăйсенченех Кандауров, Грибовский, Маслов юлташсене лартнă. Çак бригадăсем хушшинче ăмăрту сарăлса кайнă.

Халě вěсем пысăк мастерлăхпа, пултарулăхпа ěçлеççě. Виççěмěш уйăх ěнтě хăйсене панă заданисене ăнăçлăн тултарса пыраççě. Август уйăхěнче, вăламран илсен, плана 130—140 процент тултарса ěçлерěç, уйрăм кунсенче ашшер хут ирттерсе тултарнă.

Çамрăк рабочисем кашниех специальноçсем илнě: пурин те 3 — 4-мěш разрядсем. Вěсем туса кăларнă продукци пахалăхě те лайăх.

— Техникăна хăвăрттăн вěренсе çитнě май ěç тухăçлăхне ўстерсе ěçлекенсем хушшинче хěрарăмсем те сахал мар. Вěсенчен чылайěшěсем «арçын профессийěсене» вěренсе çитнě. Салахутдиновăпа Колесникова юлташсем юлашки уйăхсенче столяр-сборщиксем пулса ěçлеме пуçланчěç. Август уйăхěнче кашниех нормăсене 150—170 процент тултарса пынă.

Фроловский, Емелин, Чалбаев юлташсем фрезерпе ěçлемо 2—3 уйăх хушшинчех хăнăхса çитнě. Анчах малтанхи уйăхсенчех нормăна тултарса пырайман. Халě акă вěсем те панă заказсене срокчен тата лайăх пахалăхпа пурнăçлаççě.

Х. ЛИСИН.

Ют çěршывсенче

Пěтěм тěнчери студентсен Вашингтонри съезчě

ВАШИНГТОН, сентябрěн 7-мěш. (ТАСС). Студентсен пěтěм тěнчери съезчěн юлашки ларăвěнче Мускав университетěнче вěренекен студентсен, Мускаври Бауман районěнчи студентсен, Мускаври медицина институтěнчи аспирантсен тата Мускаври текстильнăй институтри студентсен саламěсене вуласа панă.

Съездра резолюцисем йышăннă. Вěсене студентсен съездра суйланă пěтěм тěнчери яланах ěçлекен комитечě ырланă. Çав комитета çамрăксен ытти организацийěсемпе çыхăну пуçласа яма хушакан резолюци йышăннă.

Ларусенче пуринче те совет делегачěсем тěп вырăнта пулнă. Совет делегачěсем çинчен прессăра питех те нумай çырнă, радиостанцисем передачăсем организациленě, кинохроника ўкерсе илнě.

Съездра темиçе кун хушши пынă прениссене пěтěçтерекен деклараци йышăннă. Декларацин çак пайне—Европа континенчě çине мěнле пулсан та хăвăртрах тапăнса кěрес тěлěшпе Рузвельтпа Черчилль хăйсен обязательствисене пурнăçа кěртессине студентсем пěр шухăшлăн шанса тăни çинчен калакан пайне делегатсем пысăк хаваслăхпа кěтсе илнě.

Декларацире Англипе Инди хушшинчи калаçусене Индин коалициллě национальнăй правительствине тăвас енěпе халех çěнетсе яма кирли çинчен тата тěнěл держависене хирěç пыракан вăрçа Индин мěнпур вăйěсене мобилизацилес шутпа Инди халăхне политикăллă ирěклěх парасси çинчен калание те делегатсем хěрўллěн алă çупса кěтсе илнě.

Англи морякěсем совет флотěнчи хěрарăмсен ěçěнчен тěлěнсе савăнаççě

ЛОНДОН, сентябрěн 8-мěш. (ТАСС). Рейтер агентствин тинěс çар ěçěсене пăхса тăраканě çапла пěлтерет: темиçе уйăх каярах ССР Союзне каякан суднăсен караванне противник хаяррăн атакăланă пулнă. Караванри суднăсенчен пěри хытах сиенленнě. Ун çинче пушар тухнă. Каравана хўтěлесе пыракан эсминец: «Пулăшу кирлě мар-и?» тесе ыйтсан, çав суднăн команди: «Çук, кирлě мар, спасибо» тесе ответленě. Парохода тěтěмпе çулăм хупăрласа илнě. Эсминец татах: «Эсир суднăна пăрахатăр-и, çук-и?» тесе ыйтнă, татах хирěçле ответ килнě. Кайран суднăна пулăшу кирли паллă пулса тăрсан, эсминец çывăха пынă та моряксем çав суднăн борчě çине куснă. Вěсем судно тěрлě çěрте çунните курнă, анчах вěсене пуринчен ытларах судно çинчи пожарнăйсемпе кочегарсем вырăс хěрарăмěсем пулни тěлěнтернě.

Çав вăхăтрах караванри эсминецсенчен пěри, Германин пикировка тăвакан бомбардировщикě пырса тапăннине пула, питех те вăйлăн сиенленнě. Вырăссен портěнче якорь ярса, эсминец хăйне ремонтлама рабочисем ыйтнă. Тепěр темиçе минутăран рабочисем пырса çитнě. Вěсем хěрарăмсем пулнă. Вěсен аллинче çěнě оборудовани пулнă. Эсминеца срокчен икě кун малтан юсаса пěтернě. Эсминец çинчи офицерсенчен пěри тěлěнсе савăннипе çапла каланă: «Ку хěрарăмсем хăйсен ěçне çавтери лайăх пěлеççě», тенě.

Фашистсен Балтика таврашěнчи террорě

ЛОНДОН, сентябрěн 7-мěш. (ТАСС). Фашистсен Балтика таврашěнче тухакан пичечě кунти халăхсем оккупантсене хирěç тăрасси вăйлансах пынине пытарма пултараймасть. Çавна пула гитлеровецсем хăйсен полици отрячěсене вăйлатаççě, вěсене çапăçăва тухма хатěрлеççě. Хаçатсем пěлтернě тăрăх, август уйăхěнче Берлинран Ригăпа Таллин хулисене полицейскисен икě ушкăнě таврăннă. Вěсене Германире ятарласа «инструктаж» панă пулнă. «Дейче цейтунг ин остланд» хаçатра çакăн пек пěлтерў тухнă: хěвелтухăçěнчи провинцисенче тăракан эсесовецсен Ригăри эсэсовецсен влаçěсем патне хăйсен обязанноçěсем тěлěшěпе тěплě инструкцисем илмо халех пымалла, тенě çав пěлтерўре. Эсэсовецсемпе полицин Латвири пуçлăхě Шредер нумаях пулмасть полицин Латвири чаçěсене пăхса тухнă. Вăл çапла каланă: полицин обязанноçěсем—çěршыва хěçпăшаллă нумай ушкăнсенчен (урăхла каласан партизансенчен), оккупациллě влаççене хирěç çаплах вăйлăн кěрешсе пыраканскерсенчен, тасатасси пулса тăрать, тенě.

Оккупантсем юлашки уйăхсенче нумай тěрлě постановленисем кăларни кунта Германие хирěç кěрешесси вăйлансах пынине кăтартса парать. Балтика таврашěнчи оккупациленě республикěсенче пурăнакан çынсен, 16 çултан иртнисен, июлěн 1-мěшěнчен пуçласа, вěсен хăйсем пурăнакан вырăнтан урăх çěре каймалла пулсан, ятарласа ирěк пама ыйтмалла. Çак правилăна пăсакансене каторгăри ěçе ямалла тăваççě.

Çак кунсенче «Ревалер цейтунг» хаçат çапла пěлтерně: Германин Таллинри специальнăй трибуналěн председателě заявлени пичетлесе кăларнă. Унта саботажниксемпе партизансене тата вěсене пулăшакансене хирěç кěрешме часах Балтика таврашěнчи республикăсенче Германия çěнě, хаяр закон кăларасси çинчен пěлтерně. Çавăн пекех тата Эстони сыранěсем патěнче кěсменлě тата паруслă кимěсемпе çўреме чаракан распоряжени кăларнă.

Гитлерла сынçиенсем Францири еврейсене тискеррěн пусмăрлаççě

ЛОНДОН, сентябрěн 8-мěш. (ТАСС). Оккупантсен приказě тăрăх Парижра еврейсене тискеррěн асаплантарни çинчен Лондонра çěнě хыпарсем илнě. Чирлě еврейсене оккупантсем больницăсенчен хăваласа кăлараççě. Ачасене ашшě-амăшěсенчен туртса илеççě. Арçынсемпе хěрарăмсене тата ачасене 28 пин çынна арестленě чухне 300 çын хăйсене хăйсем вěлернě. Парижра еврейсене хирěç çавтери тискер ěçсем тунине протестлесе Парижри администрациллě аппарат членěсем те тухатуха каланă.

БОЛГАРИРЕ ЮТÇĚРШЫВСЕН ДИПКУРЬЕРĚСЕМ ÇИНЕ ТАПĂНАÇÇĚ

«Ла тюрки» хаçат статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра юлашки вăхăтра Болгари территорийě çинче нейтральнăй çěршывсен дипломатиллě представительствисен сотрудникěсем çине нумай хутчен тапăнни палăрни çырнă. Кăçалхи август уйăхěнче Стамбула каякан поезд çинче паллă мар çынсен ушкăнě, поезд Софирен тапранса кайсанах, Швейцарин çав поезд çинче ларса пынă дипкурьерне тапăннă та дипломатиллě почтăна пěтěмпех çаратнă. Унччен малтан Болгарире Швецин дипкурьерě çине тапăннă пулнă.

Хаçат кускěретěн паларса тăракан икě обстоятельствăна уйрăмах кăтартса парать: Болгари территорийě çинче дипломатиллě представительствăсен сотрудникěсем çине тапăнасси часчасах пулса пынă пирки, вěсене никпле те ăнсăртран пулакан ěçсем теме çук. Болгари влаçěсем айăплисене пěрине те тытса чарман.

Хаçат çапла кăтартса парать: çавнашкал тапăнусемшěн Болгари влаçěсем пěлмěшпех ответ тытаççě, мěншěн тесен, пěтěм тěнчери пуринпешěн те паллă пулса тăракан правăсем тăрăх влаçсем ютçěршывсен дипломатиллě представителěсен, Болгари территорийě çинче кусса çўрекенскерсен, хăрушсăрлăхне упрама тивěçлě. Хаçат çапла çырать: дипломатиллě документсене çаратас тěлěшпе ятарласа ěçлекен ютçěршыв агенчěсене витсе хăварса, Болгария нейтральнăй çěршывсемшěн тăшманла ěçсем тумалли вырăн пулса тăрать. Хаçат çапла шутлать: çавнашкал фактсем малашне те пулса пырсан, нейтральнăй çěршывсем Болгари тěлěшпе репрессиллě мерăсем те йышăнма пултараççě. (ТАСС).

Союзниксен авиацийěн ěçěсем

ЛОНДОН, сентябрěн 8-мěш. (ТАСС). Официальнăй йěркепе çапла пěлтереççě: ěнер Америкăн «Вěçекен крепость» йышши бомбардировщикěсем Шидамри (Роттердам çывăхěнчи) верфьсем çине тата Утрехт ятлă чугунçул узелě çине вěçсе пырса тапăннă. Бомбардировщиксене Англин, доминионсен тата союзлă çěршывсен истребителěсем хўтěлесе пынă. Оккупациленě территори тěлěнче пулса иртнě сывлăшри çапăçура противникăн 12 истребительне пěтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне темиçе машинăна сиенленě.

Çав кунах Англин бомбардировка тăвакан авиацийěн уйрăм самолечěсем Эмдена, Бремерхафена тата Хěвеланăç Германин ытти объекчěсене атакăланă.

Англи подводнăй лодкисен Вăтаçěр тинěсри кěрешěвě

ЛОНДОН, сентябрěн 7-мěш. (ТАСС). Официальнăй йěркепе çапла пěлтернě: Англин подводнăй лодкисем юлашки темиçе эрне хушшинче тěнěл держависен суднисен караванěсене, Вăтаçěр тинěсěн хěвелтухăçěнчи пайне материалсем турттараканскерсене, чылай пысăк сиенсем кўнě. Неприятелěн 7 суднине путарнă тата 3 суднине сиенленě.

Египетри çапăçусем

ЛОНДОН, сентябрěн 8-мěш. (ТАСС). Официальнăй йěркепе çапла пěлтереççě: сентябрěн 6-мěш ыран тенě чух çěрле фронтăн сурçěр участокěнче патрульсем активлăн кěрешнě. Кăнтăрти участокра Англи войскисемпе артиллери хěвеланăçнелле чакакан противника малалла йěрлесе пынă.

Финляндия выçă хěл умěнче

СТОКГОЛЬМ, сентябрěн 8-мěш. (ТАСС). Финляндире продовольстви тěлěшпе лару-тăру куллен начарланса пыни пирки финсен пичечě питех те шикленсе çырать. «Суомен сосиалидемокраатти» хаçат çакна палăртать: çуллахи вăхăтра пахча-çимěçсем пухса илнě пулин те, промышленноçлă хуласенче, вăл шутра Хельсинкипе Таммерфорсра та, продовольстви тěлěшпе ěçсем лайăхланма мар, татах та ытларах япăхланнă. Тăранса пурăнмалли тěп апат-çимěç пулса тăракан пулла та халě ниçта та тупса илме çук.

Сентябрěн 2-мěшěнче Хельсинкире выçă ларакан халăхăн делегацийě снабжени министерствине пынă. Иртнě хěлле продовольстви тěлěшпе хулара пулнă катастрофăна сирсе ямашкăн делегаци çирěп мерăсем йышăнма ыйтнă.

Пичет кăтартса панă тăрăх, нумаях пулмасть запасра пулнă продуктсем те халě пěтнě. Çапла, «Илкка» хаçат çырнă тăрăх, пěр уйăх каярах кăна Финляндире сахарин запасěсем пулнă. Халě вěсем ниçта та çук.

Мăйракаллă шултăра выльăхсен шучě Финляндире вăрçă пуçланнăранпа 25 процент чакнă. Выльăхсен мěнпур хисепěн тăватă пайěнчен виçě пайě юлнă, анчах апла пулин те халăха сěтпе аш-какай продукчěсене çавтери пěчěк нормăсемпе параççě. Ăçта кайса кěнě-ха вěсем?—тесе ыйтать «Суомен сосиалидемокраатти» хаçат. Вăл мěнпур продовольствие Финляндирен Германие турттарса кайни çинчен тўрех калама хăяймасть. Çитес хěлле снабжени мěнле пуласси çинчен пичет уйрăмăнах шикленсе çырать. «Похиолан Саномат» хаçат çапла çырать: «Иртнě хěллехи çавтери хăрушла лару-тăру татах пуласси çинчен шухăшлама та йывăр, мěншěн тесен халăх чăтăмлăхěн хăйěн виçи пур». Хаçат тўрех çакна асăрхаттарать: хулари халăха кăштах та пулин çěрулми тата сăкăр памасан, «шалти фронт» тўссе тăраймасть. Çав вăхăтрах хаçат уççăнах: лару-тăру лайăхланассине шанмалли çук, мěншěн тесен ялсенчен ялхуçалăх продукчěсем тăратасси куллен чакса пырать, • тесе йышăнать.

АНГЛИРИ ТРЕД-ЮНИОНСЕН КОНГРЕСĚ УÇĂЛНĂ

ЛОНДОН, сентябрěн 7-мěш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пěлтерет: сентябрěн 7-мěшěнче Блэкпульре Англири тред-юнионсен конгресě уçăлнă. Конгреса 700 делегат пынă. Вěсем 5.500 пин члена пěрлештерсе тăракан 230 профсоюзăн представителěсем пулса тăраççě. Конгресра тред-юнионсен конгресěн генсовет председателě Уолстенкрофт умсăмах каланă.

—o—

К Ě С К Е Н

** Кěрешекен Францин çар чаçěнче, Çывăхри-Хěвелтухăçěнче, Африкăра тата Лăпкă океанри çěршывсенче вырнаçса тăраканскерсенче, 60 пин çын ытла шутланать. Кусемсěр пуçне çапăçусене тинěс-çар флочěн 6 пин морякě тата 2.800 летчик хутшăнаççě. Союзлă çěршывсен суту-илў суднисем çинче французсен çавăн пекех 2 пин морякě ěçлет. Вěсем кěрешекен Франци майлă тăраççě.

** Италия вăрçа хутшăннăранпа Вăтаçěр тинěсре тěнěл держависен суту-илў суднисене пěтěмěшпе 2.366 пин тонна водоизмещенилěх путарнă е сиенленě.

Кунсăр пуçне противник Вăтаçěр тинěсре 9 крейсер тата эсминецсемпе торпеднăй катерсем, пысăк мар суднăсем 50 яхăн çухатнă.

** Нумаях пулмасть Швецин Седерхамн портěнчи суднăсем тăвакан Марма верфěнче çěршывра юлашки темиçе çул хушшинче пулнă пушарсенчен чи вăйлă пушар тухнă. Верфьсем пěтěмěшпе пекех пěтнě. Пожарниксен 15 команди вут-кăвара пěтерме хăтланни ăнăçсăр пулнă. Пушар пирки пулнă тăкаксен хисепě 250 пин кěренке стерлинг пулать. Верфьсем çинчен çулăм порт çине куçнă, унта 5 судно çунма тытăннă. Çавăн пекех Мальмери тир-сăран заводěнче те вăйлă пушар тухнă. Сиенсем темиçе миллион кронăлăх шутланаççě. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Чувашский сельскохозяйственный институт доводит до сведения вновь поступающих студентов, что занятия начинаются 1-го октября, а последний срок приемных испытаний с 20 по 25 сентября.
2—1 Дирекция.

Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум
об'являет, что поступающие в техникум могут совмещать учебу с работой на производстве.
Дирекция.

ЧУВАШСОЮЗУ ТРЕБУЮТСЯ
на постоянную работу в г. Чебоксарах и в районах: ревизоры, главные и старшие бухгалтера, экономисты, преподаватели по учету и машинистка.
Обращаться: гор. Чебоксары, Театральная, 1/5, Чувашпотребсоюз. 3—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĚ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 6, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарěн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайěн — 3—99, пахуçалăх пайěн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 927 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.